27-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 МАРТ 2 ЭРНЕКУН 40(6791) №

# Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

## Çамрӑк ӑрӑва политикӑллӑ воспитани парасси—комсомолӑн тӗп задачи

Совет çамрӑкӗсем фашистла нимӗç захватчикӗсене хирӗç пыракан вӑрçӑра, пӗтӗм совет халӑхӗпе пӗрле, Тӑван çӗршыв умӗнчи хӑйсен тивӗçне тарӑн ӑнланнине, Ленин—Сталин парти ӗçне чӗререн парӑнса тӑнине кӑтартса пачӗç. Вӑрçӑ çулӗсенче совет çамрӑкӗсен политикӑри тата производствӑри активлӑхӗ ытларах ӳсрӗ. Çамрӑк воинсем нимӗç тискер кайӑкне тӗпӗ-йӗрӗпех пӗтерсе тӑкассишӗн паттӑррӑн çапӑçаççӗ. Промышленноçпа транспортра, ялхуçалӑхӗнче ӗçлекен çамрӑксем хӑйсен пӗтӗм вӑйне фронта пулӑшнӑ çӗре параççӗ. Совет çамрӑкӗсен паттӑр ӗçне Сталин юлташ пысӑка хурса хакларӗ.

Вӑрçӑ çулӗсенче çамрӑксен вӑйне нимӗç захватчикӗсене хирӗç кӗрешнӗ çӗре мобилизацилес тӗлӗшпе ленинла-сталинла комсомол политикӑллӑ тата организаторла пысӑк ӗçсем турӗ. Анчах çамрӑксен мӗнпур вӑйне гитлерла Германие тӗпренех пӗтерсе тӑкассишӗн, нимӗç захватчикӗсенчен ирӗке кӑларнӑ районсенчи хуçалӑха юсаса çине тӑратассишӗн, хамӑрӑн çӗршывӑн хӑватне малалла вӑйлатассишӗн кӗрешнӗ çӗре мобилизацилес тесен, çамрӑксем хушшинче политикӑллӑ воспитани ӗçне лайӑхлатсах пымалла.

ВЛКСМ Центральный Комитечӗн XIII-мӗш пленумӗ çамрӑксем хушшинчи политикӑллӑ воспитани ӗçне вӑйлатма комсомол организацийӗсене паха программӑпа хӗçпӑшаллантарчӗ. Халӗ ӗнтӗ, вӑхӑта вӑраха ямасӑр, комсомолӑн пӗтӗм ӗçне пленум постановленийӗсене пурнӑçа кӗртес ӗмӗтпе организацилемелле. Çамрӑксене хамӑрӑн Тӑван çӗршыв ӗçне, Ленин—Сталин парти ӗçне чӗререн парӑнса ӗçлекен, Тӑван çӗршывӑн тӑшманӗсене чӗререн курайман çынсем пулма вӗрентсе ӳстерессси — комсомолӑн кулленхи тӗп задачи пулса тӑрать.

Комсомол организацийӗсен çамрӑксем хушшинчи политикӑллӑ воспитани ӗçӗ нумай тӗрлӗ те анлӑ пулмалла. Чи малтанах Ленин—Сталин вӗрентӗвӗпе усӑ курса, çамрӑксене пурнӑç çине коммунистла пӑхма, этемлӗх пухнӑ мӗнпур пӗлӳсене вӗренсе алла илме пулӑшмалла, дисциплинӑна пӑхӑнма, ӗç çине социализмла пӑхма вӗрентмелле. Çамрӑксенчен сывлӑх тӗлӗшпе çирӗп çынсем пӑхса ӳстерес тата вӗсен творчествӑллӑ вӑйне çӗклес енӗпе те нумай ӗçлес пулать.

Комсомолецсемпе çамрӑксем хушшинче политикӑна вӗренес ӗçе татӑклӑнах лайӑхлатни кирлӗ. Пӗтӗмӗшлӗ пӗлӳ пысӑкрах комсомолецсен марксизмпа ленинизма хӑйсем тӗллӗн вӗренмелле. «ВКП(б) историйӗн кӗске курсне» вӗренме пултаракан, анчах хӑйсем тӗллӗн вӗренме опыт çук комсомолецсемпе çамрӑксене пуçламӗш парторганизацисем çумӗнчи политшкулсене е комсомол организацийӗсем çумӗнчи кружоксене явӑçтармалла. Сахал вӗреннӗ çамрӑксем валли кружоксем организацилемелле. Харпӑрхӑй тӗллӗн вӗренекенсем валли лекцисем, докладсем, консультацисем ытларах ирттерес пулать.

Çавӑн пекех комсомол организацийӗсен шкулсенчи вӗренӳ пахалӑхне лайӑхлатас тата çамрӑксене производствӑран татӑлмасӑр вӗрентес ӗç çине те тимлӗн çавӑрӑнса пӑхмалла. Çамрӑксене каçхи шкулсене явӑçтарнипе пӗрлех харпӑрхӑй тӗллӗн вӗренессине вӑйлатмалла. Кӗнекепе ӗçлеме, литературӑна, историне, географине юратма хӑнӑхтарас пулать. Анчах та хальхи вӑхӑтра Шупашкар, Улатӑр, Канаш хулисенчи комсомол организацийӗсем çамрӑксен шкулӗсене пулӑшас ыйтӑва хакламасӑр тӑраççӗ-ха. Çавӑнпа ӗнтӗ Канаш хулинчи каçхи политшкула вӗренӳ çулӗн пуçламӗшӗнче 41 çын çӳренӗ пулсан, халӗ пурӗ те 16 çын çеç çӳрет. Каçхи шкулсене хакламасӑр тӑнине халех пӗтермелле.

Çамрӑксене воспитани парас тӗлӗшпе социализмлӑ ӑмӑртӑва организацилени паллӑ вырӑн йышӑнса тӑрать. Социализмлӑ ӑмӑрту йӗркелес енӗпе комсомол организацийӗсен пысӑк опыт пур. Иртнӗ çулта вӑйлӑ тырпулшӑн пыракан ӑмӑртӑва çамрӑксен 369 звени хутшӑннӑ. Вӗсенчен нумайӗшӗсем илнӗ обязательствӑсене ирттерсе пурнӑçа кӗртнӗ. Пур комсомол организацийӗсем те ӑмӑрту ӗçне лайӑх йӗркелесе ертсе пынӑ пулсан, паллах, ӑмӑртӑва хутшӑннисен хисепӗ ытларах пулма пултарнӑ. Çапла вара çамрӑксене ӗç çине социализмла пӑхма, дисциплинӑна пӑхӑнма вӗрентессине те лайӑхрах туса пыма май пулнӑ. Малашнехи ӗçре комсомол организацийӗсен кашни çамрӑка ӑмӑртӑва явӑçтарас пулать.

Çамрӑк ӑрӑва воспитани парас тӗлӗшпе культурӑллӑ-массӑллӑ ӗç пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Пирӗн çав ӗçе лайӑх йӗркелеме условисем пур. Клубсем, вулав çурчӗсем, хӗрлӗ кӗтессем, спорт обществисем тата ытти нумай тӗрлӗ учрежденисем,—çаксем пурте политикӑллӑ воспитани ӗçне лайӑхлатас ӗçе пысӑк пулӑшу пама пултараççӗ. Анчах та комсомол организацийӗсем асӑннӑ учрежденисемпе организацисене çителӗксӗр пулӑшаççӗ-ха. Чылай çӗрте вулав çурчӗсем йӗркеллӗ ӗçлемеççӗ, спорт ӗçне массӑллӑн сарса пымаççӗ. Комсомол организацийӗсен, профсоюзсемпе пӗрле, çутӗç организацийӗсен, физкультура обществисен ӗçне лайӑхлатас тесе халех татӑклӑ мерӑсем йышӑнмалла.

Çамрӑксене политикӑллӑ воспитани парас ӗçе лайӑхлатас тесен, çав ӗçе актива, совет интеллигенцине анлӑн явӑçтармалла. Апла пулсан, комсомолӑн кашни организацийӗн культура учрежденийӗсенче ӗçлекенсемпе, учительсемпе, наукӑпа литература тата искусство работникӗсемпе кулленех тачӑн çыхӑнса ӗçлемелле.

Çамрӑксене политикӑллӑ воспитани парас ӗçе лайӑхлатасси комсомолӑн организациллӗ ӗçне вӑйлатма хушать. Комсомол работникӗсем ӳлшӑнса тӑрассине тӗпренех пӗтермелле. Комсомол пухӑвӗсен авторитетне çӗклемелле, самокритикӑпа критикӑна сарса пымалла. Комсомолӑн Обкомӗпе райкомӗсен пуçламӗш организацисене ертсе пырас ӗçе лайӑхлатмалла.

Комсомол организацийӗсем çийӗнче ФЗО шкулӗсемпе ремесла училищисенче вӗренекенсем хушшинчи воспитани ӗçне лайӑхлатас енӗпе те пысӑк ответлӑх тӑрать. Комсомол организацийӗсен вӗренекенсемпе тачӑн çыхӑнмалла, вӗсене комсомол ӗçне явӑçтармалла, вӗрентекенсене кулленхи ӗçре пулӑшса тӑмалла.

Комсомолӑн республикӑри организацийӗсенче ВЛКСМ Центральный Комитечӗн XIII-мӗш пленумӗ йышӑннӑ постановленисене сӳтсе-явас ӗç пуçланчӗ. Паян Шупашкарта комсомол активӗн республикӑри пухӑвӗ ӗçлеме тытӑнать. Иккӗленмелли çук, актив пухӑвӗ пленум решенийӗсене тӗплӗн сӳтсе-явсан, самокритикӑпа критикӑна анлӑн сарса пырсан, çав решенисене пурнӑçа кӗртме татӑклӑ мероприятисем палӑртса хӑварӗ.

Комсомолӑн ертсе пыракан органӗсем, кашни пуçламӗш организаци, партие ертсе пынипе, пленум решенийӗсене пурнӑçа кӗртессишӗн, çамрӑксем хушшинчи политикӑллӑ воспитани ӗçне лайӑхлатассишӗн пӗтӗм вӑя хурса кӗрешме тытӑнӗç.

## Совет Информаци Бюровӗнчен

### ФЕВРАЛӖН 27-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

**БЕЛОРУССИРИ** 2-мӗш фронт çарӗсем, малалла наступлени туса пырса, **ХОЙНИЦЕ (КОНИТЦ)** хулинчен хӗвеланӑçнерехре тӑшман хирӗç тӑнине çӗмӗрсе тӑкнӑ та, тӑвата кун хушши çапӑçса, 70 километр таран малалла кайнӑ.

Наступлени туса пырса, фронт çарӗсем Померанири **ШЛОХАУ, ШТЕГЕРС, ХАММЕРШТАЙН, БАЛЬДЕНБЕРГ, БУБЛИЦ** хулисене—çулйӗрсен паха узелӗсене тата нимӗçсен оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункчӗсене—туртса илнӗ, çавӑн пекех тата, тӑшманпа çапӑçса, халӑх пурӑнакан ытти 100 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра — **ПОЛЬНИТЦ, ЦЕХЛАН, ФЕРСТЕНАУ, ДРАВЕН, ГРОСС КЮДДЕ, КЛАЙН КЮДДЕ** ятлӑ пысӑк ялсем.

**БРЕСЛАУ** хулинче пирӗн çарсем хула хупӑрласа илнӗ тӑшман группировкине пӗтерсе тӑкасшӑн çапӑçнӑ, 12 квартал туртса илнӗ.

Чехословакире, **ЛУЧЕНЕЦ** хулинчен çурçӗр-хӗвеланӑçнерехре тата хӗвеланӑçнерехре, пирӗн çарсем, Карпат тӑвӗсен тӑрӑхӗнчи сӑртла-вӑрманлӑ вырӑнти йывӑр условисенче кӗрешсе, **ВИГЛЯШ, ЗВОЛ СЛАТИНА, БОРОВИНЫ, ГРАБОВ ГРУНЬ, ОРЕМОВ ЛАЗ, СЕМАГРАД, МЛАДОНИЦЕ** ялӗсене çапӑçса туртса илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса çӳренӗ тата чылай пунктра тӗллӗн-тӗллӗн çапӑçнӑ.

Февралӗн 26-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗçсен 66 танкне çӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри çапӑçусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 6 самолетне персе ӳкернӗ.

### ФЕВРАЛӖН 28-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Февралӗн 28-мӗшӗнче пирӗн çарсем **КЕНИГСБЕРГ** хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑçнерехре малалла тапӑнса пынӑ, **ГРЮНЛИНДЕ, ВОРВЕГЕН, ЛЕНКЮНЕН, ОТТЕН, ГОТТЕСГНАДЕ, ФРИДРИХСХОФ** ялӗсене туртса илнӗ.

**БЕЛОРУССИРИ** 2-мӗш фронт çарӗсем, малалла тапӑнса пырса, февралӗн 28-мӗшӗнче **НОЙШТЕТТЕН** хулипе **ПРЕХЛАУ** хулине—çулйӗрсен паха узелӗсене тата нимӗçсен Померанири оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункчӗсене—туртса илнӗ, çавӑн пекех тата, тӑшманпа çапӑçса, халӑх пурӑнакан ытти 50 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра—**СВОРНИГАЦ, ГЛАСХЮТТЕ, НОЙГУТ, АЙЗЕНХАММЕР, ГРАБАУ, ГРОСС КАРЦЕНБУРГ, ВУРХОФ, ШПАРЗЕЕ, ШТРАЙТЦИХ** ятлӑ пысӑк ялсем.

**БРЕСЛАУ** районӗнче пирӗн çарсем хулара хупӑрласа илнӗ тӑшман группировкине пӗтерсе тӑкасшӑн çапӑçнӑ, **БРЕСЛАУ** хулипе пӗрлешсе ларнӑ **КЛЕЙНЕ-ЧАНШ** ялне, **ШВАРЦ** фирмин металлурги заводне тата газ заводне туртса илнӗ, хулара вунӑ квартал йышӑннӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса çӳренӗ тата чылай пунктра тӗллӗн-тӗллӗн çапӑçнӑ.

Февралӗн 27-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗçсен 29 танкне çӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри çапӑçусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 6 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Кенигсберг хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑçнерехре пирӗн çарсем тӑшманӑн Хӗвелтухӑç Пруссири группировкине хупӑрласа илнӗ унка малалла хӗссе пынӑ. Пӗр соединени чаçӗсем вӑйлӑ çапӑçнӑ хыççӑн хытӑ çирӗплетнӗ темиçе пункта туртса илнӗ. Трофейсем тытса илнӗ. Тӑшман, хӑйӗн унччен çухатнӑ позицийӗсене каялла туртса илме хӑтланса, çӗр каçиччен 16 хутчен контратака тунӑ. Совет чаçӗсем тӑшман контратакисене пурне те ӑнӑçлӑн сирсе янӑ. Ирхине ирех пирӗн подразделенисем каллех малалла кайнӑ та хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ.

Пӗр участокра тимӗрпе бетонран тунӑ хӑватлӑ дот пирӗн пехотӑна малалла кайма чарса тӑнӑ. Гвардин старши лейтенанчӗ Долговязов ертсе пыракан подразделенири ултӑ сапер çӗрле çав дот патне шуса пынӑ та танксене çӗмӗрмелли 14 мина хунӑ. Çав минӑсем çурӑлса кайнипе нимӗçсен дочӗ унти гитлеровецсемпе пӗрлех сирпӗнсе кайнӑ. Тӑшман контратакине сирсе янӑ чухне Молочков сержант ертсе пыракан тупӑ расчечӗ нимӗçсен хӑй тӗллӗн çӳрекен икӗ туппине çунтарса янӑ. Пулеметчиксем Данильчевпа Бычков рядовойсем тӗл персе, тӑшман пехотин пӗр ротине сапаласа янӑ, нимӗçсен пӗр ушкӑнне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Белоруссири 2-мӗш фронт çарӗсем çаплах наступлени туса пынӑ. Совет пехотинецӗсем, танкисчӗсем тата кавалерисчӗсем тӑшмана вӑйлӑн пыра-пыра çапаççӗ, артиллерипе авиаци пулӑшнипе, нимӗçсен хирӗç тӑмалли узелӗсене аркатаççӗ. Гварди кавалери соединенийӗн чаçӗсем, малалла куçса пырса, Нойштеттин хули патне пырса тухнӑ. Кавалеристсен подразделенийӗсем хулан кӑнтӑр хӗрринче çирӗпленсе ларнӑ нимӗçсене атакӑлама тытӑннӑ, хулари тӑшман гарнизонӗн тӗп вӑйӗсем кавалеристсене хирӗç çапӑçма пуçланӑ. Çав хушӑра пирӗн ытти чаçсем хулана çурçӗр енчен вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Икӗ енчен хӗссе лартнӑ тӑшман гарнизонне вара аркатса тӑкнӑ. Нойштеттин хулине—нимӗçсен оборонин тӗреклетнӗ паха пунктне, 5 чугун çулӑн тата темиçе шоссе çулӗн узелне—пирӗн çарсем йышӑннӑ. Кун каçиччен пулса иртнӗ çапӑçусенче тӑшманӑн 3.000 салтакӗпе офицерне çити пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн чаçсем 5 паровоз, вӑрçӑ хатӗрӗсем тиенӗ 200 вагон, 9 боеприпас складӗ тата ытти трофейсем те тытса илнӗ. 600 нимӗçе ытла тыткӑна илнӗ.

Нойштеттин хулинче нимӗçсем каторгӑллӑ ӗçе хӑваласа кайнӑ 1.500 совет гражданне пирӗн çарсем ирӗке кӑларнӑ.

Белоруссири 2-мӗш фронтри боецсемпе офицерсем тӑшмана ӑнӑçлӑн çӗмӗреççӗ.

Савин лейтенантӑн роти пӗр тӗреклетнӗ пункта çавӑрса илсе тытса илнӗ, темиçе вунӑ гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. Ротӑри боецсем нимӗçсенчен хӑй тӗллӗн çӳрекен пӗр туппине тата 12 хир туппине тытса илнӗ. Тепӗр участокра Пустоваров старши сержант, алӑ вӗççӗн тытӑçса, 5 нимӗçе вӗлернӗ, 2 пулемет тытса илнӗ. Осюкевич рядовой тӑшман салтакӗсен ушкӑнӗпе çапӑçма тытӑннӑ, ручной пулеметпа персе, 13 гитлеровеца вӗлернӗ. Разведчик Карнаухов красноармеец хӑйне панӑ задание пурнӑçа кӗртнӗ чухне нимӗçсен 4 салтакӗпе пӗр офицерне вӗлернӗ.

* * *

Бреслау районӗнче пирӗн çарсем хупӑрласа илнӗ тӑшман группировкине пӗтерсе тӑкасшӑн çапӑçнӑ. Оппельн хулипе Бреслау хули хушшинчи чугун çулпа малалла куçса пырса, совет чаçӗсем Бреслау хулипе пӗрлешсе ларнӑ Клейне-Чанш ялне туртса илнӗ те Бреслау хулин кӑнтӑр-хӗвелтухӑç пайне вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Вӑйлӑ çапӑçнӑ хыççӑн пирӗн штурмлакан ушкӑнсем Шварц фирмин металлурги заводне нимӗçсенчен тасатнӑ. Ку заводран гитлеровецсем хирӗç тӑрса çапӑçмалли узел туса хунӑ пулнӑ. Пирӗн подразделенисем çавӑн пекех тата Вольф фирмин металлурги заводне вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та тӑшманпа завод территорийӗнче çапӑçма тытӑннӑ. Тепӗр участокра нимӗçсен 70 салтакӗ, аллисене тӑратса, пирӗн позицисем патне пыма пуçланӑ. Гитлеровецсем вӗсене пулеметсемпе тата минометсемпе вӑйлӑн пеме тытӑннӑ. Вӗсем çав нимӗç салтакӗсен пӗр пайне вӗлерсе тӑкнӑ. Ыттисем, совет позицийӗсем патне çитсе, тыткӑна парӑннӑ.

* * *

Нимӗçсен 547-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 1092-мӗш полкӑн Хӗвелтухӑç Пруссире тыткӑна илнӗ командирӗ Франц Беллер подполковник çапла каласа кӑтартнӑ: «Вунӑ кун хушши пӗр чарӑнмасӑр çапӑçни манӑн полка халран кӑларчӗ. Çав хушӑра полкра 600 салтакпа 20 офицер ытла аманчӗç е вилчӗç. Хӗвелтухӑç Пруссие Германирен пӗтӗмӗшпех татса илнине пӗлнӗ хыççӑн салтаксем хӑйсен вӑйӗсене пачах та шанми пулчӗç. Кая тӑрса юлакан салтаксен хисепӗ кунран кунах ӳссе пыма пуçларӗ. Вӗсенчен нумайӗшӗ, çапӑçӑва кӗрессерен пӑрӑнса юлма тӑрӑшса, хӑйсен подразделенийӗсенчен юриех тӑрса юлаççӗ те тылра сулланса çӳреççӗ. Нимӗç салтакӗсен çапӑçури пултарулӑхӗ питӗ нумай чакнӑ. Çавӑн пекех офицерсен шухӑш-кӑмӑлӗсем те питӗ начарланса кайнӑ. Кӗрсе ӳкнӗ шӑтӑкран Германи текех çӑлӑнса тухасса вӗсем те ӗнтӗ пачах шанми пулчӗç».

## Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗнче

### 1944-45 çулхи кӗркуннепе хӗллехи вӑхӑтри вӑрман хатӗрлевӗ мӗнле пыни çинчен

Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ çакна палӑртаççӗ: 1944—45 çулхи кӗркуннепе хӗллехи вӑхӑтра вӑрман хатӗрлемелли плана тултарса çитерес тӗлӗшпе фронтри пек ӗçлемелли уйӑхлӑха Хӗрлӗ Çар уявӗ ячӗпе хутшӑнса, хӑшпер районсем чылай пысӑк ӗçсем турӗç. Куславкка, Чурачӑк, Шӑхасан районӗсем хӑйсен планӗсене тултарчӗç. Сӗнтӗрвӑрри, Первомайски, Елчӗк, Шупашкар районӗсем те плана тултарса çитереççӗ. Вӑрман хатӗрлекен предприятисем—Çӗмӗрлери механизациленӗ вӑрман пункчӗ, Алтышево, Улатӑр вӑрман хуçалӑхӗсем авиаци промышленноçӗ валли хырпа хурӑн хатӗрлесе турттарса памалли паха задание срокра пурнӑçларӗç. Вӑрман сыхлав Управленийӗ авиаци промышленноçне—хырпа хурӑн, Çулйӗр Халӑх Комиссариатне вутӑ хатӗрлесе тата турттарса парас ӗçе вӗçлерӗ.

Анчах та чылай районсем, уйрӑмах Етӗрне, Канаш, Кувакино, Çӗрпӳ, Элӗк районӗсем, вӑрман хатӗрлес тӗлӗшпе Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗ панӑ заданине тултармарӗç, февраль уйӑхӗнче начар ӗçлерӗç. Çавна пула, республика 1944—45 çулсенчи кӗркуннепе хӗллехи вӑхӑтри вӑрман ӗçӗсен планне февралӗн 25-мӗшӗ тӗлне хатӗрлес енӗпе—94,5 процент, турттарса кӑларас енӗпе—74,8 процент, вӑрманти çулсем патне турттарса парас енӗпе 43,2 процент çеç тултарчӗ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обком бюровӗ çапла йышӑннӑ:

1. 1944—45 çулхи кӗркуннепе хӗллехи вӑхӑтра вӑрман хатӗрлемелли плана тултарса çитерес тӗлӗшпе фронтри пек ӗçлемелли уйӑхлӑха кӗçалхи çулӑн мартӑн 15-мӗшӗччен тӑсас.

2. Райсовет исполкомӗсен председателӗсене тата ВКП(б) райкомӗсен секретарӗсене çапла тума хушас: колхозсенче колхозниксемпе колхозницӑсем хушшинче, çавӑн пекех вӑрман хатӗрлевӗнче ӗçлекен рабочисем хушшинче вӑрман хатӗрлемелли плана срокчен тултарас тӗлӗшпе массӑллӑ ӑнлантару ӗçне вӑйлатмалла. Вӑрман хатӗрлекен предприятисен руководителӗсен рабочисен ӗç тухӑçлӑхне ӳстерессишӗн çине, йывӑç турттарнӑ çӗрте лашасемпе, автомобильсемпе, тракторсемпе май пур таран ытларах усӑ курасси çине тимлӗн çавӑрӑнса пӑхмалла.

3. Районсен тата вӑрман хатӗрлекен предприятисен мӗн чухлӗ вӑрман хатӗрлемеллине тата турттарса тухмаллине кӑтартса тунӑ пилӗккунлӑх графика çирӗплетес.

4. Кӗркуннепе хӗллехи вӑхӑтра вӑрман хатӗрлемелли плана тултарнӑ районсене чугун çул валли вутӑ 1945 çулхи иккӗмӗш квартал шучӗпе хатӗрлесе тата турттарса пама сӗнес.

5. Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ райсовет исполкомӗсен председателӗсемпе ВКП(б) райкомӗсен секретарӗсене вӑрман хатӗрлемелли плана срокчен тултарса, 1945 çулхи çураки умӗн лашасене канма тӑратма кирли çинчен асӑрхаттараççӗ.

### Кашмашра вӑрман хатӗрлеме васкамаççӗ

МУРКАШ. (Телефонпа). Хӗрлӗ Çар уявне тивӗçлипе кӗтсе илме хатӗрленсе, районри чылай колхозсем чугун çул валли вутӑ хатӗрлемелли плана тултарчӗç. Сӑмахран, Чуманкасси ял Советӗнчи Энгельс ячӗпе тӑракан, Çатракасси ял Советӗнчи «Пионер», «Красный воин» тата Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозсем çак кунсенче плана пӗтӗмпех тултарчӗç.

Анчах та Кашмашри «Свобода» колхоз хӑйӗншӗн ытти колхозсем ӗçлесе парасса шанать пулмалла. Ку колхоз вутӑ хатӗрлемелли плана касас енӗпе 35 процент, турттарас енӗпе 37 процент çеç тултарнӑ. Колхозӑн вӑрман ӗçӗнче малта пыма та майсем пур. Мӗншӗн тесен колхозра лашасем нумай, вӑрманта ӗçлеме пултаракан çынсем те çителӗклӗ. Колхоз вӑрман хатӗрлевӗнче юлса пыни унӑн председателӗ И. Петровский юлташ çак ӗçе хакламаннинчен килет.

Тойкилт ял Советӗнчи «Новая жизнь», Матьӑк ял Советӗнчи Красин тата Киров ячӗпе тӑракан колхозсем те вӑрман хатӗрлес тӗлӗшпе фронтри пек ӗçлемелли уйӑхлӑха нимӗн тумасӑрах ирттереççӗ.

**Ф. МАЛЫШКИН.**

### „Вӑрман касаканӑн мӗн астумалла"

Вӑрман касакансем валли çавӑн пек ятлӑ справочник пичетленсе тухрӗ. Ку пӗчӗк кӗнекере вӑрман касмалли инструментсем çинчен, йывӑçа епле тӗрӗс касса ӳкересси, каснӑ йывӑççене сыпӑкласси т. ыт. çинчен тӗплӗн каласа панӑ. Кӗнекере 26 ӳкерчӗк. Тиражӗ—3000, хакӗ 1 т. 50 пус.

### 1944—45 ÇУЛХИ КӖРКУННЕПЕ ХӖЛЛЕХИ ВӐХӐТРА ВӐРМАН ХАТӖРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА МӖН ЧУХЛЕ ТУЛТАРНИНЕ КӐТАРТАКАН СВОДКА (Февралӗн 25-мӗшӗ тӗлне)

| Районсем тата вӑрман хатӗрлекен организацисем | Плана тултарнӑ (процентпа): Турттарас енӗпе | Плана тултарнӑ (процентпа): Хатӗрлес енӗпе | Мӗнле вырӑн йышӑннать: Турттарас енӗпе | Мӗнле вырӑн йышӑннать: Хатӗрлес енӗпе |
|---|---|---|---|---|
| Чурачӑк | 104,3 | 103,4 | 1 | 8 |
| Куславкка | 103,0 | 115,0 | 2 | 6 |
| Шӑхасан | 97,0 | 120,6 | 3 | 4 |
| Первомайски | 96,1 | 106,7 | 4 | 10 |
| Шупашкар | 95,6 | 105,0 | 5 | 12 |
| Чкаловски | 93,2 | 68,8 | 6 | 27 |
| Елчӗк | 89,0 | 100,5 | 7 | 14 |
| Советски | 87,6 | 90,5 | 8 | 15 |
| Муркаш | 85,4 | 88,9 | 9 | 19 |
| Комсомольски | 84,5 | 80,6 | 10 | 24 |
| Красноармейски | 83,9 | 85,0 | 11 | 21 |
| Çӗмӗрле | 78,4 | 125,3 | 12 | 3 |
| Сӗнтӗр | 77,1 | 62,1 | 13 | 29 |
| Пӑрачкав | 74,6 | 111,3 | 14 | 7 |
| Тӑвай | 69,0 | 90,5 | 15 | 18 |
| Çӗрпӳ | 68,5 | 91,4 | 16 | 16 |
| Канаш | 66,7 | 85,8 | 17 | 20 |
| Сӗнтӗрвӑрри | 66,2 | 118,1 | 18 | 5 |
| Вӑрнар | 66,0 | 106,2 | 19 | 11 |
| Вӑрмар | 64,9 | 67,4 | 20 | 28 |
| Элӗк | 61,4 | 79,9 | 21 | 25 |
| Калинино | 61,1 | 107,1 | 22 | 9 |
| Ишлей | 54,8 | 130,4 | 23 | 2 |
| Хӗрлӗ Чутай | 52,7 | 102,2 | 24 | 13 |
| Йӗпреç | 51,2 | 82,8 | 25 | 22 |
| Октябрьски | 50,2 | 72,6 | 26 | 26 |
| Шӑмӑршӑ | 49,6 | 163,6 | 27 | 1 |
| Етӗрне | 48,0 | 81,4 | 28 | 23 |
| Улатӑр | 41,1 | 61,6 | 29 | 30 |
| Кувакино | 37,7 | 91,0 | 30 | 17 |
| * * * | | | | |
| Кире вӑрман хуçалӑхӗ | 104,8 | 110,0 | 1 | 4 |
| Йӗпреç вӑрман хуçалӑхӗ | 104,3 | 133,0 | 2 | 2 |
| Вӑрнар вӑрман хуçалӑхӗ | 97,0 | 161,0 | 3 | 1 |
| Çӗмӗрле вӑрман хуçалӑхӗ | 90,0 | 106,0 | 4 | 5 |
| Алтышево вӑрман-промхозӗ | 86,0 | 73,7 | 5 | 18 |
| Долгополянӑри вӑрман завочӗ | 84,8 | 115,8 | 6 | 3 |
| Улатӑр вӑрман хуçалӑхӗ | 81,6 | 89,3 | 7 | 8 |
| Йӗпреç участокӗ | 80,3 | 83,1 | 8 | 10 |
| Буински вӑрман-промхозӗ | 71,9 | 99,6 | 9 | 6 |
| Вӑрнар вӑрман-промхозӗ | 70,5 | 94,5 | 10 | 7 |
| Канаш вӑрман-промхозӗ | 67,2 | 57,4 | 11 | 19 |
| Çӗмӗрлери механизациленӗ вӑрман пункчӗ | 65,6 | 76,3 | 12 | 16 |
| Йӗпреç вӑрман-промхозӗ | 64,1 | 82,4 | 13 | 11 |
| Хӗрлӗ Чутайри механизациленӗ вӑрман пункчӗ | 63,2 | 80,3 | 14 | 12 |
| Кирери механизациленӗ вӑрман пункчӗ | 61,4 | 86,7 | 15 | 9 |
| Атӑл леш енчи механизациленӗ вӑрман пункчӗ | 55,8 | 76,6 | 16 | 15 |
| Улатӑрти механизациленӗ вӑрман пункчӗ | 52,9 | 74,5 | 17 | 17 |
| Алтышеври вӑрман завочӗ | 42,5 | 79,1 | 18 | 13 |
| Шӑмӑршӑ вӑрман-промхозӗ | 41,1 | 78,4 | 19 | 14 |

### Колхозниксем ялхуçалӑх çулӗн итогӗсене сӳтсе-яврӗç

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Кӗçӗн Çӗрпӳел ял Советне кӗрекен «Красный Октябрь» колхоз членӗсем хӑйсен пухӑвӗнче 1944-мӗш ялхуçалӑх çулӗн итогӗсене сӳтсе-яврӗç. Колхоз правленийӗпе ревизи комиссийӗн отчечӗсем тӑрӑх çакӑ палӑрчӗ: колхоз 1944 çулхи ялхуçалӑх ӗçӗсене, иртнӗ çулхисемпе танлаштарсан, ӑнӑçлӑрах туса ирттернӗ. Государство обязательствисем тӑрӑх памалли тырра тата ытти продуктсене вӑхӑтра парса татнӑ, тӗрлӗ фондсене те хывса çитернӗ. Вӑрлӑх фондне вӑрлӑх участокӗ çинчен пухса илнӗ тырра хывнӑ. Вӑрлӑхсене пӗтӗмӗшпех тасатса сортланӑ, акмалли кондицие лартнӑ. Вӑрлӑхсен страховой фондне 50 центнер тӗштырӑ хывнӑ, фронтовиксен çемьисене пулӑшмашкӑн 30 центнера яхӑн тырӑ уйӑрнӑ.

Фондсене туса çитернӗ хыççӑн кашни ӗçкунӗ пуçне 1,4-шер килограмм тӗштырӑ валеçнӗ. Ӗçкунӗсем çине Е. Евграфов, Молоков çемйисем 70-шер пӑт тырӑ илнӗ. А. Орешкина колхозница иртнӗ çулта 370 ӗçкунӗ тунӑ, вӑл 32 пӑт тырӑ илнӗ. Çавнашкалах А. Никифорова, Е. Никитина колхозницӑсем те 30-шар пӑт ытла тырӑ илнӗ.

Колхоз 1944 çулта обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли государство планне ытлашшипех тултарнӑ.

Колхозниксемпе колхозницӑсем, иртнӗ çулхи ялхуçалӑх ӗçӗсен итогӗсене сӳтсе явнӑ май 1945 çулта татах та хӗрӳллӗнрех ӗçлеме пулчӗç. Вӗсем халӗ гектартан 100 пӑтран кая мар тӗштырӑ туса илессишӗн ӑмӑртӑва тухрӗç.

**В. АНДРЕЕВ.**

### АГРОКУЛЬТУРА ÇУРТНЕ ТӐВАÇÇӖ

Вӑрнар районӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсем ыйтнипе, ялхуçалӑхӗнче малта пыракансен опытне сарас тата агротехникӑна вӗренес тӗлӗшпе ӗçлеме Вӑрнар поселокӗнче Агрокультура Çуртне тума йышӑннӑ. Иртнӗ çул вӑйлӑ тырпул туса илнӗшӗн панӑ 60.000 тенкӗ премин укçине пӗтӗмпех Агрокультура Çуртне тунӑ çӗре яма пӑхнӑ. Çак çурт валли кирлӗ пулакан йывӑçа пӗтӗмпех колхозсем касса хатӗрлесе, турттарса параççӗ. Агрокультура Çуртне Чӑваш автономийӗ 25 çул тултарнӑ кун тӗлне туса пӗтерме йышӑннӑ.

## СССР Совнаркомӗнче

### АЛЕКСЕЙ НИКОЛАЕВИЧ ТОЛСТОЙ ПИСАТЕЛЕН ЯТНЕ ЕМӖРЛЕХЕ УПРАСА ХӐВАРАССИ ÇИНЧЕН

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ çапла йышӑннӑ:

1. Алексей Николаевич Толстой писателе Мускавра памятник лартас.
2. Мускаври Спиридоньевски урамри 2-мӗш номерлӗ çуртӑн, А. Н. Толстой пурӑннӑскерӗн, стени çине мемориальнӑй хӑма çапса хурас.
3. Мускав хулинчи Спиридоньевски урама Алексей Толстой урамӗ тесе ят парас.
4. 1945—1946 çулсенче РСФСР КОГИЗне А. Н. Толстой сочиненийӗсен пуххине пичетлесе кӑларма хушас.
5. А. Н. Толстой ячӗпе çакӑн пек стипендисем памалла тӑвас:

а) Мускаври М. В. Ломоносов ячӗпе тӑракан Государство Университетӗнче—филологи факультечӗн студенчӗсем валли 400-шер тенкӗлӗх икӗ стипенди;

б) СССР Совет Писателӗсен Союзӗн Литература институтӗнчи студентсем валли 400-шер тенкӗлӗх икӗ стипенди.

### Франци республикин Чрезвычайнӑй тата Полномочнӑй Посолӗ Ж. Катру генерал СССР Верховный Совет Президиумӗн Председательне М. И. Калинина хӑйӗн верительнӑй грамотисене пани

Февралӗн 27-мӗшӗнче Кремльте СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. И. Калинин Франци республикин Чрезвычайнӑй тата Полномочнӑй Посолне Ж. Катру генерала йышӑннӑ. Йышӑну Ж. Катру Посол хӑйӗн верительнӑй грамотисене панӑ май пулса иртнӗ.

Ж. Катру генералпа пӗрле çаксем пулнӑ: Посольство советникӗ П. Шарпантье господин, Францин СССР-ти Çар Миссийӗн Начальникӗ Э. Пети генерал, Посольствӑн 1-мӗш Секретарӗ Э. Д. Карбоннель господин тата Посольствӑн ытти членӗсем. Посол вӗсене М. И. Калининпа паллаштарнӑ.

Верительнӑй грамотӑсене панӑ вӑхӑтра çаксем пулнӑ: СССР Ют çӗршыв Ӗçӗсен Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ В. Г. Деканозов, СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. Ф. Горкин, СССР Наркоминделӗн Протокол Отделӗн Заведующийӗ Ф. Ф. Молочков тата СССР Наркоминделӗн 1-мӗш Европа Отделӗн Заведующийӗн Заместителӗ А. Г. Кулаженков.

Верительнӑй грамотӑсем панӑ хыççӑн М. И. Калинин Ж. Катру генералпа калаçнӑ.

### *Хӗрлӗ Çар 27 çул тултарнӑ ятпа ют çӗршывсен государство деятелӗсем И. В. Сталин юлташ патне янӑ саламсем*

Хӗрлӗ Çар 27 çул тултарнӑ ятпа И. В. Сталин юлташ патне çаксем саламсем янӑ: Кӑнтӑр Африка союзӗн премьер-министрӗ Смэтс фельдмаршал, чехословаксен хӗçпӑшаллӑ вӑйӗсен главнокомандующийӗ Сергей Ингр, Иран правительствин председателӗ Мортез Баят, Канада премьер-министрӗ В. Л. Макензи Кинг, Бельги премьер-министрӗ Ван Акер, Итали министрсен совечӗн председателӗ Бономи, Венгри премьер-министрӗ Миклош, США çар министерстви ячӗпе Г. Л. Стимсон, Болгари çар министрӗ Дамян Белчев генерал-лейтенант, Варшава хулинчи Халӑх Совечӗн Президиумӗ хушнипе Мариан Спыхальский, Мао-Цзе-дунпа Чжу-дер (Китай). (ТАСС).

# Ялти массăллă-политикăллă ĕçе анлăн сарар

Ялхуçалăхĕ вăрçă экономикинче паха вырăн йышăнса тăрать. Нумай миллионлă çар валли нумай тĕрлĕ вăрçă техники, боеприпассемпе снаряжени кăна мар, апат-çимĕçсемпе тумтирсем тата урана тăхăнмаллисем те нумай кирлĕ. Çавăн пекех пирĕн хуласенчи ĕççыннисем валли те, Хĕрлĕ Çара вăрçă техники туса парас тĕлĕшпе пĕтĕм вăя хурса ĕçлекен промышленноçпа транспортри рабочисем валли те апат-çимĕç татти-сыпписĕр парса тăмалла.

Пирĕн колхоз хресченĕсем хăйсен патриотла тивĕçлĕхне чыслăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ, Тăван çĕршыва ялхуçалăх продукчĕсем çителĕклĕн парса тăраççĕ. Сталин юлташ колхоз хресченĕсен ĕçне пысăка хурса хакларĕ. Вăл çапла каларĕ:

«Хĕрлĕ Çар вăрçăн тăваттăмĕш çулĕнче те, колхоз хресченĕсем тăрăшнине пула, апат-çимĕç çитменнине курмасть. Колхозниксемпе колхозницăсем—рабочисемпе интеллигенцие апат-çимĕç, промышленноçа вара—чĕртавар парса тăраççĕ, фронт валли хĕçпăшалсемпе снаряжени туса кăларакан заводсемпе фабрикăсене йĕркеллĕн ĕçлеме май параççĕ. Пирĕн колхоз хресченĕсем. Тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçне пĕтĕмĕшпех ăнланса тăрса, тăшмана çĕнтерес ĕçре Хĕрлĕ Çара активлăн пулăшаççĕ».

Çĕршыври мĕнпур колхоз хресченĕсемпе пĕрлех пирĕн республикăри колхозниксем те мухтавлăн ĕçлеççĕ. Чăваш республикинчи колхозсем пĕлтĕрхи ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕç. Вĕсем, лайăх тырпул туса илсе, ăна вăхăтра пухса кĕртрĕç, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем срокчен парса татрĕç. Планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне нумай пин пăт тырпул, çĕрулмипе пахча-çимĕçсем пачĕç.

Халĕ колхозсемпе МТС-сем, совхозсем умĕнче, партипе совет тата çĕрĕç органĕсем умĕнче çав тери пысăк задачăсем тăраççĕ: тырпулсен тухăçлăхне пур майсемпе те малалла ÿстермелле, пухса илекен тĕштырăсен тата ытти ялхуçалăх продукчĕсен пĕтĕм хисепне ÿстермелле, çапла вара гитлерла Германие пуçĕпех çапса аркатас ĕçре хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çара татах та вăйлăнрах пулăшмалла. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Ялхуçалăхне аталантармалли 1945 çулти план çинчен» йышăннă хăйсен постановленийĕнче колхозсене, МТС-семпе совхозсене, çĕрĕç органĕсене, партипе совет организацийĕсене çапла тума хушаççĕ те ĕнтĕ.

Вăйлă тырпул çутçанталăк паракан парне пулса тăмасть. Ăна пĕтĕм вăя хурса ĕçлесе, çĕнтерсе илмелле. Кăçалхи тырпул ăнăçлăхне халĕ, çуракине хатĕрленнĕ чухне, ăна ирттерме вăйсемпе майсене пухнă чухне, татса параççĕ. Çуракине хатĕрленес ĕç вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи паха задача пулса тăрать. 1945 çулхи вăрçă вăхăтĕнчи çуракине пур енĕпе те тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илес пулать. Çавăнпа та СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ совета парти тата çĕрĕç органĕсене çуракине туса ирттерме колхозсемпе МТС-сене, совхозсене вăхăтра хатĕрлесе çитерме хушса хăварчĕç.

Çуракине лайăх хатĕрленсе çитмелли паха майсенчен пĕри вăл—ялти массăллă-политикăллă ĕçе большевикла тĕрĕс организацилени пулса тăрать. Парти райкомĕсем, партипе комсомол организацийĕсем умĕнче халĕ çав тери пысăк та паха задача—колхозсенчи массăллă-политикăллă ĕçе кирлĕ пек йĕркелесе ярас задача тăрать.

ВКП(б) райкомĕсем, ялти мĕнпур партипе комсомол организацийĕсем халăх хушшинчи политикăллă ĕçĕн вăрçă вăхăтĕнче пухнă пуян опычĕпе çуракине ăнăçлăн хатĕрленсе ирттерес ĕçре усă курма тивĕçлĕ. Пичетпе радио тăрăх, докладсемпе лекцисенче, калаçусенче тракторсемпе ытти ялхуçалăх машиннисене вăхăтра та пахалăхлăн юсаса хатĕрлесси, акма паха вăрлăхсем хатĕрлесе хурасси, уйхире удобренисем тăкса çемçетесси, кадрсене йышлăн вĕрентсе хатĕрлесси, уйхирсенче юр тата çурхи шывсене тытса хăварасси, ĕç выльăхĕсене уйхир ĕçĕ валли хатĕрлесе çитересси колхозсемпе совхозсен тата МТС-сен вăйлă тырпулшăн пыракан кĕрешÿри чи паха задачи пулса тăни çинчен ялти ĕççыннисене тăтăшах тĕплĕн ăнлантарса пымалла. Пропагандистсемпе агитаторсен пĕрремĕш тивĕçĕ—СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн «Ялхуçалăхне аталантармалли 1945 çулти план çинчен» йышăннă постановленийне мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, МТС-семпе совхозсенчи рабочисене тĕплĕн ăнлантарса парасси, çапла вара партипе правительство пирĕн ялхуçалăхĕ умне лартнă кăçалхи задачăсене пурнăçланă çĕре мĕнпур вăйсемпе майсене, пĕтĕм резервсене мобилизацилесси пулса тăрать.

Ялти ĕççыннисем халь пулса иртекен политикăллă событисемпе питех те интересленеççĕ. Ĕççыннисем ыйтнине тивĕçтерес тесен, парти райкомĕсен тата райкомсенчи пропагандăпа агитаци отделĕсен колхозсенче районри ертсе пыракан работниксен политикăллă доклачĕсене организацилемелле, колхозлă ялти ĕççыннисене Отечественнăй вăрçă фрончĕсенчи, çĕршыври тата пĕтĕм тĕнчери пысăк событисемпе паллаштарса пымалла.

Çав ĕçе Октябрьски районра чылаях аван организациленĕ. Кунта ВКП(б) райкомĕ çумĕнче 47 çынран докладчиксен группине тунă. Çав группăна районри партипе советăн пĕтĕм активне кĕртнĕ. Докладчиксем колхозсенче тăтăшах пулаççĕ, колхозниксене политика ыйтăвĕсемпе докладсем туса параççĕ. Кăçалхи январьпе февраль уйăхĕсенче парти райкомĕн докладчикĕсем 70 доклад ытла туса панă. Парти райкомĕ, докладчиксене тăтăшах пухса, вĕсем валли инструкциллĕ докладсем туса ирттерет.

Çав вăхăтрах Кувакино районĕнче ку ĕçе япăхтарса янă. Ячĕшĕн тенĕ пек ВКП(б) райкомĕ çумĕнче 21 çынран докладчиксен группине тунă. Анчах çав çынсем колхозсене тухса докладсем туса памаççĕ. Вĕсем январьпе февраль уйăхĕсенче колхозсене пĕрре те тухса çÿремен. Парти райкомĕ докладчиксене пухса каласмасть, вĕсен ĕçне тĕрĕслесе тăмасть.

Шупашкар районĕнче пĕтĕмпе 101 колхоз, анчах докладчиксен группине 21 çынран кăна тунă. Паллах, çав докладчиксем колхозниксемпе колхозницăсем ыйтнине тивĕçтерме пултараймаççĕ.

Партипе комсомол организацийĕсем ялсенче ĕçлекен агитаторсене суйласа илес ĕç çине питĕ тимлĕн çавăрăнса пăхма тивĕçлĕ. Çав ĕçе партипе совет тата комсомол активне, учительсене, ялхуçалăх специалисчĕсене, колхоз ĕçĕнче малта пыракан çынсене явăçтармалла. Массăллă-политикăллă ĕçе организациленĕ çĕрте агитаципе пропаганда ĕçĕн кадрĕсене тата çав ĕçе явăçтарнă ытти çынсене пĕлсе те тĕрĕс вырнаçтарса тухни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ялти коммунистсемпе комсомолецсене тата агитаторсене çуракине хатĕрленес ĕçĕн татса паракан тĕп участокĕсене: машинăсене юсакан мастерскойсене, кăçалхи вăйлă тырпул никĕсне хывас тĕлĕшпе ĕç вĕресе тăракан уйхир бригадисемпе звенисене, вăрлăх тасатакан машинăсем патне, лаша витисемпе фермăсене, тимĕрçĕ лаççисене вырнаçтарса тухмалла.

Агитаторсене тĕрĕс суйласа илсе вырнаçтарнин тĕслĕхне Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхозри пуçламĕш парторганизаци çумĕнчи агитколлектив кăтартса парать. Унта пĕтĕмпе 38 агитатор, вĕсенчен ВКП(б) членĕсем—3 çын, парти кандидачĕсем—6 çын, 12 комсомолец тата 17 çын партире тăманнисем. 38 агитатортан кунта 9 учитель, 6 бригадир, 4 конюх, ыттисем — колхоз ĕçĕнче малта пыракан колхозниксем. Агитаторсене пурне те уйрăм участоксем çумне—бригадăсем, звеносем тата фермăсем çумне çирĕплетнĕ. Хăйсем ĕçленĕ вырăнта вĕсем колхозниксене Совет Информаци Бюровĕн сводкисене вуласа параççĕ, политика ыйтăвĕсемпе калаçусем ирттереççĕ, колхозниксене Тăван çĕршыври тата пĕтĕм тĕнчери пысăк событисемпе паллаштараççĕ. Час-часах агитаторсем, колхозниксене 5—10 килшерĕн пухса, колхозниксен килĕсенчех калаçусем ирттереççĕ. Агитаторсем массăллă-политикăллă ĕçе колхоз ĕçĕпе çыхăнтарса пыраççĕ, колхозниксене вĕсен умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлама хавхалантараççĕ. Парторганизаци агитколлективăн тата кашни уйрăм агитаторăн ĕçне куллен ертсе пырать. Парти пухăвĕсенче уйăхсерен агитколлектив руководителĕн тата уйрăм агитаторсен ĕçĕсем çинчен отчетсем итлеççĕ, çавăн пекех агитколлективăн ĕç планĕсене çирĕплетеççĕ. Агитколлективăн тĕрĕс йĕркеленĕ ĕçĕ колхоза хуçалăхпа политика кампанийĕсене ăнăçлăн ирттерме пулăшать. Колхоз иртнĕ ялхуçалăх çулне лайăх вĕçленĕ, килес çуракине те пĕтĕмĕшпех хатĕрленсе çитнĕ.

Тÿрременех колхозсенче, МТС-сенче, бригадăсенче тата звеносенче ĕçлекен агитаторсене тăтăшах ĕçлĕн пулăшса пыни кирлĕ. Çав агитаторсен аллинче литература çителĕксĕррине манма юрамасть. Вĕсене кирлĕ пулăшу илмешкĕн парткабинета çÿреме час-часах май туси памаççĕ. Колхозсенчи агитаторсене ĕçре пулăшма районри мĕнпур пропаганда вăйĕсене явăçтармалла. Агитколлективсенче агитаторсен политикăллă вĕренĕвне организацилемелле, вĕсене пухса политика ыйтăвĕсемпе инструкциллĕ докладсем туса памалла, çавăн пекех тата агитаторсен ĕç опычĕ çинчен те докладсем итлемелле. Районри ертсе пыракан работниксен организацие хуçалăх ыйтăвĕсемпе колхозсене кайнă чухне агитаторсене вырăнсенче консультацисем парса пулăшмалла, вĕсене пухса политикăллă докладсемпе калаçусем ирттермелле, массăллă-политикăллă ĕçе йĕркелес тĕлĕшпе вырăнти партипе комсомол организацийĕсене ĕçлĕ пулăшу памалла.

Анчах та партин хăшпĕр райкомĕсем çав ĕçе хакламаççĕ. Акă, сăмахран, ВКП(б) Хĕрлĕ Чутай райкомĕ агитколлективсене япăх ертсе пырать, вĕсене ĕçлĕ пулăшу памасть. Кунта агитколлектив руководителĕсене пухмаççĕ. Хăшпĕр ял Совечĕсенче агитколлектив руководителĕсене халиччен те суйласа лартман. Агитколлективсен тата агитаторсен ĕçĕпе çыхăннă ыйтусене парти райкомĕн бюровĕсенче сÿтсе явмаççĕ.

Ĕç тухăçлăхне ÿстермелли чи кирлĕ майсенчен пĕри — социализмлă ăмăрту пулса тăрать. Халĕ, çуракине хатĕрленнĕ вăхăтра, колхозсем, совхозсем, МТС-сем, çавăн пекех уйрăм бригадăсем, звеносем тата колхозниксем хушшинчи социализмлă ăмăртăва анлăн сармалла. ВКП(б) райкомĕсем, партин пуçламĕш организацийĕсем ялти социализмлă ăмăртăва куллен ертсе пыма тивĕçлĕ. Çак ĕçе большевикла ертсе пырса, кашни колхоза, МТС-а тата совхоза хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пурнăça кĕртмелле тăвас пулать. Çуракине хатĕрленнĕ май колхозсем хушшинче пĕр-перин ĕçне тĕрĕслессине организацилемелле, тĕрĕслевĕн результачĕсене вырăнти пичетпе радио урлă районри мĕнпур ĕççыннисене пĕлтермелле, кашни уйрăм колхозра вара ăмăрту мĕнле пынине кăтартакан хăмасем тумалла. Малта пыракан колхозсемпе бригадăсен, звеносемпе уйрăм стахановецсен опытне районри тата колхозсенчи стена хаçачĕсем урлă анлăн сарса пымалла. Агитаципе пропаганда работникĕсем çав материалсемпе хăйсен кулленхи ĕçĕнче анлăн усă курма тивĕçлĕ.

Çуракине хатĕрленес тата ялти массăллă-политикăллă ĕçе сарас тĕлĕшпе ялсенчи политпросвет учрежденийĕсем нумай вăй хурса ĕçлеме тивĕçлĕ. Вĕсене агитациллĕ-массăллă ĕçĕн тата агротехника пропаганди центрĕсем туса хурас пулать. Çак ĕçре вĕсене комсомолецсемпе çамрăксен уйрăмах пысăк пулăшу памалла. Вулав çурчĕсемпе колхоз клубĕсенче агрономсемпе зоотехниксен, опытнăй станци работникĕсен, малта пыракан колхозниксен калаçăвĕсене ирттермелле. Çав калаçусене çак темăсемпе те — вăрлăхсене акма хатĕрлесси, тăпрана ĕçлесе çемçетесси, ĕç выльăхĕсене ĕçе хатĕрлесси, хирте юр тытасси, çурхи шывсене тытса хăварасси çинчен калакан темăсемпе те ирттермелле. Кунта колхозниксене çĕнĕ хаçатсене, Информаци Бюровĕн сводкисене, ялхуçалăх литературине тата наука ыйтăвĕсемпе ăнланмалла çырнă ытти литературăна та вуласа парассине организацилемелле. Çак ĕçе учительсене, учрежденисенче ĕçлекен служащисене, хут пĕлекен колхозниксене, шкулсен аслăрах класĕсенче вĕренекен ачасене явăçтармалла. Колхозсенчи коммунистсемпе комсомолецсем стена хаçачĕсем йĕркеллĕ кăларса тăрассине, коллективлăн радио итлессине организацилеме тивĕçлĕ.

Çураки кампанийĕ—ялхуçалăхĕнчи чи ответлă ĕçсенчен пĕри пулса тăрать. Хĕрлĕ Çарăн аслă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланнă колхозниксем, 1945 çулхи çуракине ăнăçлăн хатĕрленсе çитсе, çĕнтерÿллĕ наступлени туса пыракан Хĕрлĕ Çара пулăшас тесе, хăйсен вăйĕсене хĕрхенмесĕр ĕçлеççĕ. Республика ялĕсенчи партипе комсомол тата совет организацийĕсем умĕнче халĕ колхозниксен массисене çурхи уйхир ĕçĕсене кăтартуллăн туса ирттерме çĕре мобилизацилессинчен пахарах задача урăх çук.

**А. ЕРЛАКОВ,**
ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци отдел заведующин заместителĕ.

---

**Швецирен Мускава датчансен паллă писателĕ Мартин Андерсен Нексе килнĕ, вăл хăйпе пĕрле хăйĕн çемьине те илсе килнĕ.**

Гитлерла Германи Совет Союзне ултавлăн тапăннă кун писатель-антифашист Мартин Андерсен Нексе хăйĕн тăван çĕршывĕнче — Копенгаген хулинчен 48 километрта пурăннă. Çав кунах — 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче — Данире чăн-чăн демократишĕн тăрăшакан çынсене, уйрăмах та хăçан та пулсан Совет Союзĕнче пулса, Совет Союзĕнчи халăхсене кăмăллакан çынсене, хаяррăн хĕстерме пуçланă. Полици паллă писательсене, художниксене тата артистсене—300 çынна тытса хупнă. Тытса хупнисем хушшинче Мартин Андерсен Нексе те пулнă. Вăл темиçе уйăх хушши тĕрмере пурăннă.

Мускавра хаçат представителĕсемпе калаçнă чухне Мартин Андерсен Нексе çапла каланă: «Фашистсем вĕçĕ-хĕррисĕр хĕсĕрленĕ хыççăн ирĕклĕ Совет Российинчи сывлăшпа сывлама пусланăшăн эпĕ питĕ савăнатăп», тенĕ.

Ӳкерчĕк çинче: Мартин Андерсен Нексе хăйĕн çемьипе пĕрле.

Е. ТИХАНОВ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

## Общинăсен палатинче Черчилль тухса калани

ЛОНДОН, февралĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Паян общинăсен палатинче премьер-министр Черчилль сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл вăрçăпа тĕнчери ларурăвăн чылай ыйтăвĕсем çинче чарăнса тăнă.

Франције Крымри конференцие чĕнменшĕн Англие критиклени çинчен Черчилль çапла каланă: Крымри конференцире пулнă аслă державăсем, вăрçăн тĕп йывăрлăхне хăйсем тÿссе ирттерекенскерсем, хăйсем шутланă вăхăтра тĕл пулма пултарас правăна чакарассипе килĕшме пултараймаççĕ, тенĕ. Крымри решенисемпе килĕшме Францин нумай сăлтавсем пур. «Германин çар хăватне ыран аркатса тăкас пулсан,—тенĕ Черчилль,—Европăри питĕ паллă консультаци комиссийĕ палăртман е тивĕçтермен ыйту юлман пулĕччĕ».

Сан-Франциско хулинче пулмалли конференцие Англин тĕп представителĕсем пулса Иден тата Эттли каймалла.

Нацисен лигипе сахал усă курнине тата вăл хăйĕн задачисене тивĕçлĕ пулманнине палăртса, Черчилль çапла каланă: «Ун вырăнне чылай вăйлăрах организаци пулса тăрĕ. Вăл организацире Пĕрлешÿллĕ Штатсем паллă вырăн йышăнса тăрĕç», тенĕ.

Польша ыйтăвĕ çине куçса, Черчилль çапла каланă: «Вырăссем тĕлĕнмелле хастарлăн та пысăк çухатусем тÿссе çапăçман пулсан, Польшăна тĕпренех аркатса тăкнă пулĕччĕç. Поляк нацийе Гитлер пĕтерсе тăкнă пулĕччĕ е чуралантарнă пулĕччĕ. «Керзон линийĕ пирки вырăссем ыйтнипе килĕшсе, эпир шанчăксăр килĕшÿ тăватпăр е хăрапипе каялла чакатпăр, тесе калакан кирек епле шухăша та эпĕ сирсе пăрахатăп,—тенĕ Черчилль.—Виçĕ аслă союзник пирвайхи хут пĕрле тытса пыракан политика тĕрĕс пулни çинчен эпĕ çав тери ĕненсе калама пултаратăп».

Виçĕ аслă держава Польшăна чылай çĕр касса парасси çинчен, вăл шутра Данциг хулине, Хĕвелтухăç Пруссин Кенигсберг хулинчен хĕвеланăçнелле тата кăнтăралла выртакан чылай пайне, Балтика тинĕсĕ хĕрринчи чылай пысăк çĕре тата Турри Силезини облаçне касса пама килĕшни çинчен каласа, Черчилль çакна палăртнă: çав çĕнĕ çĕрсене тытса тăрасси Польшăшăн пит йывăрах пулмĕ. Çакăн пирки Германи тепĕр хут тапăнма хăтланĕ е тата малашне çĕнĕ вăрçăсем сиксе тухĕç, тесе хăрамалли çук. «Тÿррипех каласан, халĕ эпир иртнĕ вăрçă хыççăнхинчен нумай çирĕпрех мерăсем йышăнатпăр, мĕншĕн тесен эпир халĕ Германи урăх нихăçан та наступлени тума ан пултартăр тесен мĕн тумаллине ĕлĕкхинчен нумай ытларах пĕлетпĕр».

Пĕтĕм тĕнчери организаци туса хурсан, пур нацисене те—пысăккисене те пĕчĕккисене те, çĕнтернисене те, аяла пулнисене те—агресси хăрушлăхĕнчен закон тата пĕтĕм тĕнчери çар вăйĕ хÿтĕлесе тăрĕ. «Виçĕ держава çапла килĕшрĕç: поляксем хăйсен хĕвелтухăç чикки пирки тунă сĕнÿсене йышăнни, çавăн пекех тата халлĕхе палăртса хума май пур таран хĕвеланăç чиккисене йышăнни—вăйлă, никама пăхăнман, пĕр йышлă Польша государствине туса хума паракан услови пулса тăрать». Черчилль çапла каланă: Крымри тата ытти конференцисем хыççăн эпĕ çапла шутлатăп: «Сталин Маршал тата совет лидерĕсем хĕвеланăç демократийĕсемпе туслă тата пĕртан пулса пурăнасшăн. Çавăн пекех эпĕ вĕсем хăйсен сăмахĕсене тытассине шанса тăратăп», тенĕ.

Англи командованийĕ ертсе пынипе çапăçакан Польша çарĕ Польшăн çĕнĕ правительствине йышăнĕ, тесе шанса каланă Черчилль. Çавăнпа пĕрлех вăл çапла каланă: йышăнас мар текен çынсене Британи империйĕнче гражданин тивĕçне тата ирĕклĕх пама май пулĕ, тенĕ.

Итали ыйтăвĕ çине куçса, Черчилль çапла каланă: Итали пирки Англи вăй политикине тытса пырасшăн, текен шухăшсемпе эпĕ килĕшместĕп, тенĕ. Унтан Египет премьер-министрне вĕлернĕ пирки Англи хуйхăрни çинчен каланă.

Юлашкинчен Черчилль çапла каланă: «Этемлĕх умĕнче иртнĕ ĕмĕрсенчинчен çутăрах пуласлăх усăлнине эпĕ шанса тăратăп. Вут-хĕм çутăрах çунать тата инçерех çутатать. Пурте пĕрле малалла кайăпăр».

### КОНСЕРВАТОРСЕН ПĔР УШКĂНĔ ТУНĂ СĔНĔВЕ ОБЩИНĂСЕН ПАЛАТИ ЙЫШĂНМАН

ЛОНДОН, февралĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: консерваторсен пĕчĕк ушкăнĕ Польша ыйтăвĕ тăрăх правительство йышăннă позицие критиклекен резолюци йышăнма сĕннĕ, çав сĕнĕве общинăсен палати йышăнман. Вăл сĕнĕве хирĕç палатăра 396 сасă, майлă 25 сасă панă.

## Рузвельт президент пресс-конференцире тухса калани

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, пилĕк эрне хушши пулман хыççăн Рузвельт, крейсер çине ларса, Пĕрлешÿллĕ Штатсене таврăннă. Çав вăхăтра вăл Крымра та пулнă.

Крейсер çинче пулса иртнĕ пресс-конференцире президент Крымри конференцин решенийĕсем çинчен каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл пĕтĕмĕшле хăрушсăрлăх тума тăрăшнине палăртнă.

Крымри конференцин решенийĕсене тĕплĕн пăхса тухса, президент çав конференцие—лайăх мир тăвас тĕлĕшпе тунă утăмсенчен пĕри пулать, тесе хакланă. Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи общественноçпа хаçатсем, конференци пысăк çитĕнÿ туни пулать, тесе хакласа, пит тĕрĕс тунă, тенĕ Рузвельт.

### ФРАНЦИРИ МИНИСТРСЕН СОВЕЧĔН ЛАРĂВĔ

ПАРИЖ, февралĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви çапла пĕлтерет: «Паян ирхине, де Голль генерал председатель пулса ертсе пынипе, министрсен совечĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бидо хăй Лондона кайса килни çинчен отчет туса панă.

Правительство çапла йышăннă: США, Великобритани тата СССР правительствисем хăйсемпе пĕрле тата Китай правительствипе пĕрле ытти пĕрлешÿллĕ нацисене Сан-Франциско хулинче пулса иртмелли конференцие пыма чĕнес ĕçе хутшăнма сĕннине йышăнас, тенĕ.

## Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ февралĕн 26-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Союзниксен çарĕсем анлă фронтпа Рер шывĕ урлă каçнă та ăнăçлăн малалла куçса пынă, вĕсем тăшман вăтамăн хирĕç тăнине çĕнтерсе пыраççĕ. Линних хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре (Германире) союзниксем Доверен, Левених тата Ральсхофен пункчĕсене туртса илнĕ. Юлих хулинчен хĕвелтухăçнерехре союзниксем Гамбах вăрманне тăшмантан тасатнă та Рейн облаçĕнчи Штейнштрасс пунктне йышăннă. Дюрен хули районĕнче союзниксем Эллен, Мерцених, Штакпейм тата Крейцау хулисене туртса илнĕ.

Вианден хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата хĕвелтухăçнерехре союзниксем Рейн облаçĕнчи Шейерн, Оберраден, Оугшейд тата Меттендорф пункчĕсене туртса илнĕ. Союзниксен çарĕсем Прюм шывĕ урлă Эхтернах хулинчен 7 миля çурçĕререхре каçнă та каçнă вырăнтан икĕ миля çурçĕр-хĕвелтухăçнелле куçнă. Веттинген хулине туртса илнĕ.

Саарбург хули районĕнче союзниксем тăшмана тапăнма тунă укрепление 4 миля таран сарнă, шалалла икĕ миля таран аслăлатнă. Февралĕн 27-мĕшĕнче союзниксен çарĕсем 3.149 нимĕçе тыткăна илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн тĕрлĕ объекчĕсене атакăланă, çавăн пекех тата Берлина тапăннă.

### АНГЛИ АВИАЦИЙĔ БЕРЛИНА ТАПАННИ

ЛОНДОН, февралĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Берлина тапăннă. Германи столицине 24 сехет хушшинче, çапла, виçĕ хут тапăннă.

Англи самолечĕсен февралĕн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Берлин çине бомбăсем пăрахнă командисем кунтан маларах Америка авиацийĕ тапăннă хыççăн тухнă пушарсене курнă. Самолетсен экипажĕсем пĕлтернĕ тăрăх. Берлин çине бомбăсем нумай пăрахнă пулнă.

### 1.800 САМОЛЕТ ЛЕЙПЦИГПА ГАЛЛЕ ХУЛИСЕНЕ ТАПАННА

ЛОНДОН, февралĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен стратегиллĕ сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, 1.100 йывăр бомбардировщика яхăн 700 истребитель хÿтĕлесе пынипе, февралĕн 27-мĕшĕнче Лейпцигри тата Лейпцигран çурçĕр хĕвеланăçнерехри Галле хулинчи чугун çулсен пысăк деповĕсене тапăннă.

### А. Я. ВЫШИНСКИЙ ЮЛТАШ БУХАРЕСТА ÇИТНĔ

БУХАРЕСТ, февралĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский юлташ паян Бухареста çитнĕ.

### РУМЫНИРИ ĔÇСЕМ ПИРКИ

БУХАРЕСТ, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Нациллĕ-демократиллĕ фронт совечĕ ĕнер хаçатсенче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

«Нациллĕ-демократиллĕ фронт Бухарестра организациленĕ демонстраци çине шалти ĕçсен министерстви çуртĕнчен, полици префектуринчен тата король двореçĕн чÿречисенчен пăшалсемпе, пулеметсемпе пенĕ. Столицăра çынсене йышлăн вĕлерессине организацилекенни Радеску генерал пулнă. Çав преступникла ĕç çине Радескуна вырăнтан кăларса арестленипе çеç ответлеме пулать. Бухарестра пулса иртнĕ хыççăн çавăн пек ĕçсем Крайова, Каракаль тата Брашов хулисенче пулса иртнĕ. Февралĕн 24-мĕшĕнче çав хуласенче нациллĕ-демократиллĕ фронтăн мирлĕ демонстрацийĕнче вилнисемпе аманнисем пулнă. Маниу тата легионерсене-фашистсене усçăнах пулăшса тăнă ытти çынсем пулăшнипе, çĕршывра ирĕклĕхпе хăйсен тивĕçлĕхне хÿтĕлеме тăрăшакан граждансен юнне юхтарнă. Çын вĕлерекен Радеску ертсе пыракан правительство халех вырăнтан тухмалла. Румынипе румын халăхĕн кунçулĕ пысăк хăрушлăхра.

Пĕтĕм çĕршыври халăха эпир фашизма тата ăна хÿтĕлекенсене—Радескуна, Маниуна, Негулескуна, Антон генерала, Илие Лазаре тата реакциллĕ шайккăн ытти представителĕсене—пĕтерсе тăкасшăн кĕрешме чĕнетпĕр. Халăх массисене эпир нациллĕ-демократиллĕ фронт правительствине туса хурассишĕн вуншар хут ытларах вăйпа кĕрешме чĕнетпĕр. Çапла туни кăна Румынине чăннипе пĕрлештерме тата тĕпренех демократизацилес çул çине кăларма пултарать. Фашистсене вилĕм!»

БУХАРЕСТ, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнерхи хаçатсенче нациллĕ-демократиллĕ фронтăн король патне янă телеграммине пичетлесе кăларнă:

«Сирĕн Величество! 1945 çулхи февралĕн 24-мĕшĕнче «Наци площадьне» массăллă митинга пуханнă халăх, мирлĕ демонстраци туса, хула урамĕсем тăрăх король двореçĕн площачĕ патне кайнă. Унта Радачану тата Патрашкану министрсем сăмах тухса каламалла пулнă. Çавăнталла каякан мирлĕ халăха шалти ĕçсен министерстви çуртĕнчен, полици префектуринчен тата король двореçĕнчен пулеметсемпе пенĕ. Çарăн Радеску палач приказĕ тăрăх пухнă фашистла çыннисем нумай граждансене амантнă е вĕлернĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах Крайова, Каракаль тата Брашов хулисенчи граждансене те çарти фашистсем пере-пере вĕлернĕ. Король двореçĕн стенисем умĕнче халăх юнĕ тăкăннă. Радеску, Маниу, Негулеску тата вĕсен шайкки корона ятне сĕртрĕç. Вĕсем ултă уйăх иртнĕ хыççăн августăн 23-мĕшĕнче йышăннă акта пĕтерсе лартасшăн. Çав акт тăрăх Румынире пĕрлешÿллĕ аслă нацисем кăмăллакан чăн-чăн демократиллĕ режим пулмаллаччĕ ĕнтĕ. Çак ушкăн халăха хирĕç пыракан диктаторла, террорла ĕçсем тума пуçлать. Нациллĕ-демократиллĕ фронтăн аяларахра ала пуснă министрĕсем çав тери çиленнĕ халăх ячĕпе мирлĕ граждансене вĕлернине хирĕç çирĕппĕн протестлеççĕ, Радеску правительствине халех вырăнтан кăларма, 1945 çулхи февралĕн 24-мĕшĕнче халăха пенишĕн айăплисене арестлесе наказани пама ыйтаççĕ». Телеграмма çине çаксем ала пуснă: Петр Гроза, Георгиу Деж, Лотар Радачану, Лукреций Патрашкану, Стефан Войтек, Владеску Ракоса, инженер Николау, Теохари Жеоржеску, Ромулус Зароли.

### РУМЫНИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЫРĂНТАН ТУХНИ ÇИНЧЕН

БУХАРЕСТ, февралĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Паян министрсен совечĕн председателĕ Радеску генерал короле правительство вырăнтан тухасси çинчен каланă. Король правительство вырăнтан тухнипе килĕшнĕ. Çĕнĕ правительство туса хурас тĕлĕшпе король канашлама пуçланă.

### БОЛГАРИРЕ ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ФРОНТ КОМИТЕЧĔСЕН СЪЕЗЧĔ ПУХĂНАС УМĔН

СОФИЯ, февралĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм çĕршывĕпех Отечественнăй фронт комитечĕсен съездне вăйлăн хатĕрленеççĕ. Пухусем пулса иртеççĕ, халăхпа çĕршывăн пит паха ыйтусене сÿтсе яваççĕ. Уессемпе облаçсенчен суйланă делегатсем Отечественнăй фронт комитечĕсем тунă ĕçсене тишкĕреççĕ, халăх мĕн ыйтнине шута илеççĕ, вăл ыйтусене пулас съездра каласа пама хатĕрленеççĕ.

### БОЛГАРИ ПОЛИЦИЙĔН СОТРУДНИКĔСЕНЕ СОФИРЕ СУД ТУНИ

СОФИЯ, февралĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Çак кунсенче халăх сучĕн 5-мĕш составĕ полици дирекцийĕпе тата çар министерствин разведка отделĕнче ĕçленĕ сотрудникĕсен ĕçне пăхса тухма пуçланă. 121 çынна айăплаççĕ. Вĕсем хушшинче 1941 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуласа полици директорĕ пулса ĕçленĕ çынсем тата полици инспекторĕсем, вăрттăн ĕçленĕ агентсем пурте пур.

### АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ТОКИОПА ИОКОГАМА ХУЛИСЕНЕ ТАПАННИН РЕЗУЛЬТАЧĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 16-мĕшĕпе 17-мĕшĕнче Токиопа Иокогама хулисем çине бомбăсем пăрахнă чухне Америка самолечĕсем сывлăшри çапăçусенче японецсен 322 самолетне персе ÿкернĕ, çĕр çинче вĕсен 137 самолетне пĕтерсе тăкнă. Кунсăр пуçне, Америка самолечĕсем японецсен 57 судноне путарнă е сиенленĕ.

Токио çине пырса тапăннă вăхăтра Америка авиацийĕн 49 самолет çухалнă. Американецсен пĕр карапне те сиенлемен.

Отв. редактор заместителĕ **А. А. ЭСХЕЛЬ.**

---

**Хусанти С. М. Киров ячĕпе тăракан химипе технологи институчĕ** 1-мĕш курса кĕме хатĕрлекен отделение вĕренме илет.

Çав отделение вăтам шкултан, техникумран тата вăтам шкулăн 9-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисене илеççĕ.

Студентсене пурне те стипенди параççĕ, кунне виçĕ хут столовăйра апатлантараççĕ, хваттер çуккисене общежитие вырнаçтараççĕ.

Заявленисене мартăн 5-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Документсене çак адреспа ямалла: гор. Казань, ул. Карла Маркса, 68, Приемной комиссии Химико-технологического института.

# РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ

### РАЦИОНАЛИЗАТОРЛА СĔНÜСЕМ

Канашри вагонсем юсакан заводра рабочисемпе инженерсем пĕр уйăх хушшинче рационализаторла 48 сĕнÿ панă, вĕсенчен 28 сĕнĕвĕпе ĕçре усă курнă. Лукин, Михальский, Кизев юлташсем панă сĕнÿсемпе усă курни çулталăкра 23.280 тенкĕ укçа перекетлеме май парать. Пĕр уйăх хушшинче кĕнĕ рационализаторла сĕнÿсем завода 200.000 тенкĕ перекетлесе хăварма май параççĕ.

### МОРДВА АССР-чи КОЛХОЗ ТЕАТРĔН СПЕКТАКЛĔСЕМ

Çак кунсенче Мордва АССР-чи колхоз театрĕ Йĕпреçре спектакльсем лартса панă. Вĕсем Островскин «На бойком месте», «Бедность не порок» ятлă пьесисене кăтартнă. Артистсем хăйсен рольсене пултаруллă вылянă. Уйрăмăнах Любим Торцов рольне выляканн 67 çулхи Александров артист пысăк мастерлăх кăтартса панă.

### КОЛХОЗ ÇАМРĂКĔСЕН КАÇХИ ШКУЛĔСЕМ

Комсомольски районри Тăманлă Выçлири 7 çул вĕренмелли шкул çумĕнче каçхине вĕренмелли 5-мĕш класс уçнă. Унта колхозри 13 çамрăк вĕренет. Çавăн пекех Комсомольскри, Анат Тимĕрчкассинчи, Çĕнĕ Мăратри, Асанкассинчи шкулсем çумĕнче те каçхине вĕренмелли шкулсем уçнă. Çав шкулсене мĕн пурĕ 69 çамрăка явăçтарнă.

### ФРОНТРА АМАННА БОЕЦСЕМПЕ ОФИЦЕРСЕМ ВАЛЛИ — ПАРНЕСЕМ

Калинино районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем шефа илнĕ пĕр госпитальре сывалакан боецсемпе офицерсем патне парнесем ярса тăраççĕ. Нумаях пулмасть вĕсем 121 килограмм тулă çăнăхĕ, 143 килограмм какай, 15 килограмм çу, 17,5 килограмм пыл, 10 литр эрех тата ытти япаласем те нумай леçсе панă.

### «КОММУНАР» ХАÇАТ ТУХМА ПУÇЛАНАРАНПА 10 ÇУЛ ÇИТНĔ

ВКП(б) Первомайски райкомĕпе ĕççынни депутачĕсен район Совечĕн органĕ—«Коммунар» хаçат тухма пуçланăранпа кăçалхи февраль уйăхĕнче 10 çул çитнĕ. Хаçат вуна çул тултарнă май редакци парти, совет, профсоюз организацийĕсенчен тата колхозсенчен саламлă çырусем йышлăн илнĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ редакторăн — 0—67, заместителĕн — 0—23, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—

НТ 00534. Типографи № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК Ч. АССР Заказ № 2. Тираж 16.000